Раççей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респуплики.

*Пӗтӗм тӗнч,ери пролетта-рисем, пӗрлешӗр!*

# Ст,енка Раçинпа

## т,ӑваш халӑхӗ.

Хакӗ 1 тен.

Тӗп Ҷӑваш Пайӗ кӑларнӑ.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧУВАШСКОГО ОТЕЛА ПРИ НАРОДНОМ КОМИССАРИАТЕ ПО ДЕЛАМ НАЦИОНАЛЬНОСТЕЙ.
ХУСАН—1919 ÇУЛ.

# СЧЕНКА РАҪИНПА ЧӐВАШ ХАЛӐХӖ.

1552-мӗш ҫулта йупа (октябрь) уйӑхӗн 3-мӗш кунӗнче Хусанпа Хусан патшалӑхӗ вырӑс аллине кӗрет. Ҫав ҫултан чӑвашсенӗн вырӑс историйӗ пуҫланат̆.

Патша аллинче пурне те: вырӑссине те, тутаррине те, чӑвашшине те — пурне те пурӑнма начар пулнӑ. Анчах чӑваша тӗттӗм пирки, вырӑсла пӗлмен пирки ӑраснах йывӑр пулнӑ.

Чӑваш халӑхӗ патшана куланай укҫан тӳлемелле пулнӑ: унсӑр пуҫне тата тырӑ, тирсем памалла пулнӑ. Куланайа пуҫтарнӑ чух вырӑс улпучӗсем хӑйсен ӗмӗтсӗрлӗхне чараймасӑр темӗн те туса пӗтернӗ. Куна епир Ҫӗрпӳ, Кармӑш, Чикме уйессенчи чӑвашсен тархасласа ҫырнӑ ҫырӑвӗсенчен пӗлетпӗр. Ҫав ҫырусем тӑрӑх „потйаччийсем" хырӑҫ-марӑҫ пуҫтарнӑ чух йарлӑк мӗн парса тӑман. Ҫавӑнпа вара пӗр укҫанах 2—3 хут тӳлеттернӗ. Ҫӗрпӳ потйаччийӗ Ивашко Чаатайев Ҫерпӳ уйес чӑвашсен арманне туртса илнӗ: ҫав арманшӑнах чӑвашсем хыснана ӑпрӑк тӳлемелле пулнӑ, Чаатайевне пӗр сасартӑкра 1000 тенкӗ тӳлемелле пулнӑ, тата ҫитменне унӑн арманӗсӗр пуҫне урӑх ҫӗрте авӑртма пултарман. Ҫав ҫынах чӑвашсене таса хут ҫинче алӑ пустарса, кайран хучӗ ҫине чӑвашсен йачӗпе вӗсем 300 тенкӗ парӑм пама пулнине ҫырса хунӑ: кунчеп ҫавӑн пекех чӑвашсем Чаатайева 200 тенкӗ парӑмлӑ пулнӑ *(Никольский. Конспект по этнографии чуваш стр. 14)*.

Шупашкарти войевота Хлопов хăй кĕсйине ўстересшĕн халăха хĕртсе, уçăсене, алăксене çĕмĕрсе тырă, пыл, укçа нухса çўренĕ. *(Никольский. История просвещения чуваш. Приложение)*.

Ђăвашсене вăрçа та илсе çўренĕ. Ђăваша тĕне кўртес тесе камантăсем йанă. Уйри ĕçлекен халăха салтаксем ђиркўве хăваласа кўртнĕ *(Никольский. История христианского просвещения чуваш)*.

Пур çĕрте те çав тĕрлĕ хĕсĕрленĕ пирки ђăваш халăхĕ ђас-ђасах патшана хирĕç тăнă, пăлханнă. Çав пăлхавăрсенђен ђи асли Сђенка Раçин ђухнехи пулхавăр.

Сђенка Раçин патне пур йурлă, пур ђухăн халăх, пур халиђђен çын хĕсĕрленине тўснĕ халăх пўхăннă. Çав халăхпа, çав „колыђпа“ па пĕрле хăйĕн тискер улпуђĕсенђен хăтăлас тесе ђăваш халăхĕ те пĕрлешнĕ. Епĕ малалла ђăваш халăхĕ Риçиппа ĕçлени çинђен, ђăваш хăй пурăнăçне йусасшăн тăрăшни çинђен каласа кăтартас тетĕп. Тата, малтанах калатăп: епĕ Хусан таврашĕнђи ђăвашсем çинђен анђах калатăп, мĕншĕн тесен ытти çĕрти ђăвашсем çинђен калама манăн матерйал çук. Кăна çырнă ђухне епĕ С. Порфирьевăн „Разинщина в Казанском крае“ (Известия общества археологии, истории и этнографии, том XXIX, выпуск 5—6 1916 года) йатлă статйана хамăн куç умĕнђе тытса тăтăм.

Çулăмсăр тĕтĕм пулмаст. Ђăвашсем те вĕрентекенсер ку ĕçе пуçласа йарайман. Сђепан Тимохвейевиђ çыннисем пур Хусан таврашĕнђи халăхсем патне çырусем йанă:

„пӗрлешес пулаť, пӗрлешмесен кайран ӳпкелемелле ан пултăр. Епир сире усал тумастăпăр, сирӗншӗн тăрăшатпăр, тесе çырнă. Сҫепан Тимохвейевиҫ Раçинпа пӗрлешнӗ ҫăвашсем хăйсем те ыттисем вӗрентнӗ Атăлăн сăрт йенҫи ҫăвашсем çармăссене те (луговые чуваши) хăйсемпе пӗрлешме ҫӗннӗ. Ҫăваш хăй те кам ырӑ çыннине сиснӗ, Раçин йенелле вара пӗтӗм ҫăваш халăхӗ çавăрăннă Шупашкар, Çӗрпӳ, Йетӗрне, Кăрмăш, Ҫикме уйесӗсем пӗтӗм Раçин йенҫе пулнă.

Шупашкар уйесӗнҫе Раçина хирӗç вăрçакан войевота Атăлăн сăрт йенне ăшнелле кӗрсе кайнă ҫухне, „Белая Воложко“ йатлă шыв çинҫе Раçин çыннисемпе 6 сехет вăрçнă, вара çӗнтерсен 7 ҫăваша çакса вӗлернӗ ыттисене вара ҫăвашсем лăпланҫăр тесе тивмесӗрех йанă.

Икӗ кунтан Парйатинский Шотҫа, йатлă йал патӗнҫе каллех Раçин çыннисемпе вăрçнă. Раçин çыннисем хушшинҫе ҫăваш, çармăс, вырăс пулнă.

Сӗнтӗр вăрри патӗнҫе ҫăвашсене Кокшайск пуçлăхӗ хăйне пулăшма хулине ҫӗннӗ. Анҫах кӗсем ăна итлемен, Çӗрпӳ патӗнҫи Раçин çыннисене епир сирӗн майлă, тесе пӗлтернӗ. Унтан тавăрăнсан пӗр прикасри улпута Михаил Хвомина вӗлерсе, Кокшайска туртса илес тесе унăн патӗнҫе пӗр виç ерне патне вăрçса тăнă. Çӗрпӳ патне Раçин çыннисем ҫасах пынă. Авăн уйăхӗн 9-мӗш кунӗнҫе Çӗрпӳри патша тарçисене çул татнă, çав кунтан вара Çӗрпӳрен 7 сухрăм йӗри тавра Раçин çыннисем тăнă, Çӗрпӳрен тухакансене нийăçта кайма та паман.

Йупа уйăхĕн 2-мĕш кунĕнҫе вара хула патне ҫитсе ҫавăрса илнĕ; хулана туртса илесех тесе ĕҫме-ҫиме хулана йамасăр, пĕр майах илесшĕн тапăнса, хула ҫыннисене кансĕрлесе тăнă.

Авăн уйăхĕн 30-мĕш кунĕнҫе (Раҫин ҫаррисем хуларан ҫиҫĕ ҫухрăмра ҫухне) Ҫĕрпӳрен Раҫин ҫарри мĕнле иккенне пĕлме Лукойан Волков—патйаҫийпе йулташсене йанă. Тавăрăпсан, Волкова-ҫиҫĕ ҫухрăмра ҫĕмпĕр, Ҫĕрпӳ тата ытти уйессенҫи тутарсемпе ҫăвашсемпе тутарсем тăраҫҫĕ, тенĕ.

Лукойан Волков вĕсен патĕнҫе пулнă. Вĕсен аттаманĕ Сĕве тутар Йамнакайко Ҫĕрпӳ патне пынине Волкова пĕлтернĕ, хăйĕн хутне кăтартса ăна ҫырса илме хушнă. Ҫав ҫĕнни халиҫҫен те ҫухалман: „Ҫыру Тонпа Йаик паттăр аттамансенҫен, Степан Тимохвейевиҫран тата Тонпа Йаик аслă ҫарĕнҫен Ҫĕрпӳ уйесĕнҫи тĕрлĕ саласенҫи, йалсенҫи хура халăха! вырăса, ҫăваша, тутара, мăкшăна: „Сирĕн хура халăхăн: вырăсăн, тутарăн, ҫавашăн турă амăшĕн ҫурҫĕшĕн пур ҫвĕттуйсемшĕн, Аслă Кĕҫĕн, Шурă Раҫҫейĕн аслă патши Алексей Михайловиҫшĕн, ырă патша ывăлĕсемшĕн, ҫăн Христос тĕнĕшĕн тăрас пулаť. Хура халăх: вырăс, тутар, ҫăваш, мăкшă! сирĕн пата Ҫĕрпӳрен йанă ҫынсем сирĕн пата йалсене, саласене пырса Ҫĕрпӳве вăрҫма хăвала пуҫласан, сирĕн кайма йурамасť, мĕншĕн тесен вĕсем сире улталаҫҫĕ, сире пурне те унта касса пĕтереҫҫĕ. Ҫĕрпӳрен йанă ҫынсене пурне те тытса ҫĕмпĕре ҫар патне йарас пулаť. Ҫĕрпу улпуҫĕсем, улпут ывăлĕсем,

мăрсапа тутарсем турă амăшĕ çурçĕшĕн, пур çветтуйсемшĕн, аслă патшашăн, патша ывăлĕсемшĕн, çăн христиан тĕнĕшĕн пĕрлешсе тăрасшăн пулсан, сирĕн, хура халăх, çав улпут, улпут ывăлĕсене, мăрса-тутарсене тивме, вĕсен çурçĕсене хур тума йурамасť. Çак ăвăс (sic) çинçи çыруран (восковая память) сирĕн, хура халăх пĕр сăмах хăвармасăр çырса илес пулаť, çырса илнисене салари çиркў çийеçўкĕсене, приççекниксене парас пулаť, тата çырса илсе тĕрлĕ вулăс, сала тăрăх сотский, старостă, теçетскисене парас пулаť. уйес çыннисем пур те çак ăвăс (sic) çырăвне пĕлççĕр. Çак хут çине Сçепан Тимохвейевиç аттаманăн авăс пиçет пуснă, ку ăвăс çырупа пирĕн çар касакĕ. *Киктипек* мăрси Ахпўрте кайнă. Сирĕн хура халăх ăна итлес пулаť, тавлашас пулмасť, ăна нимĕн те итлемесен хăвăра ўпкелемелле ан пултăр.

Çĕрпўве йупа уйăхĕн 23-мĕш кунĕççен çавăрса илсе тăнă. 23-мĕшĕнçе Парйатинский Катек вăрманне Тăпах (sic) шыв патне (Çĕрпўрен çиçĕ çухрăм) пынă. Унта Парйатинский çарне çул парас мар тесе гĕр вунă пин вырăс, çăваш, çармăс пухăннă. Çĕрпў патне пĕр 6 пин йулнă. Çул çине çарма пынисенçен нумайĕшĕ вилсе пĕтнĕ, ыттисем вăрманта тарса пытаннă. Çав кунах Парйатинский Çĕрпў патне пынă, ăна курсан Çĕрпў патĕнçи çынсем тарса пĕтнĕ. Парйатинский Çĕрпў патĕнçе виçĕ кун сут туса, çăвашсене тупа тутарса (шерçĕ) тăнă. Тăват çăваша Парйатинский Шупашкарпа Çĕрпў уйесĕнçи çăвашсене илĕртме йараť; Парйатинский хăй 540 çынран тупа

илет, унӑн хыҫҫӑн Пестушев войевота та тупа илме ҫаранмаст.

Улпутсем кун хыҫҫӑн Ҫӗрпӳ уйесне пӑлханура н тасатрӑмӑр, тесе мухтаннӑ. Анҫах ҫӳк (ноябрь) уйӑхӗн 11-мӗш кунӗнҫе Ҫӗрпу ҫавашсем вырӑссемпе, тутарсемпе Ҫӗрпӳ патне пырса улпутсене вӗсен арӑмӗсене, аҫисене нумайӗшне тыткӑна илнӗ.

Ҫӳк (ноябрь) уйӑхӗн 21-мӗшӗнҫе Ҫӗрпӳри пӑтша тарҫисем пӗр ҫаваша унтан Ҫӗрпӳве ҫавӑрса илнӗ ҫар ҫинҫен пӗлес тесе тыткӑна илме тӑнӑ, ӑнҫах Раҫин ҫарӗ ӑна хӑтарса Ҫӗрпӳ ҫарӗнҫен нумайӗшне тыткӑна илнӗ, вӗсенҫен 17 ҫын вӗлернӗ. Ҫӗрпӳ пуҫлахӗ (вайевота) Ҫӗрпӳ хулинҫе ҫын сахал тесе пулӑшу тархасласа ыйтнӑ. Раштав уйӑхӗн 22-мӗшӗнҫе Парйатинский Ҫӗрпӳве Трохвим Порштевитин капитанпа пӗр роттӑ салтак йанӑ. Ҫӗрпӳ ҫавашсем вӗсене ҫӗнтерсе хӑшне Кармӑшалла, хӑшне Йетӗрнене йанӑ, кун ҫинҫен Ҫӗрпӳре тупӑ патӗнҫе тӑракан ҫын Парйатинскийе пӗлтернӗ (вӑл Ҫӗрпӳрен раштав уйӑхӗн 25-мӗшӗнҫе тухнӑ).

Кунҫен малтан Тан. Парйатинский (раштавӑн 19-мӗшӗнҫе) Ҫуллӑ патӗнҫе Раҫин ҫарӗн пайӗ тӑнине, вӗсем хула ҫыннисене хытӑ хӗсӗрленине пӗлнӗ. Ҫавӑнпа раштавӑн 27-мӗшӗнҫе Парйатинский каллех Ҫӗрпӳ патне пынӑ. Малалла вара ун ҫухнехи хутсем ҫинҫе Ҫӗрпӳ ҫинҫен нимӗн те ҫырман. Мӗн пулнине пӗлмелле мар.

Ҫ и к м е хули йупа уйӑхӗнҫе уйӑхӗпе Раҫин ҫарӗн аллинҫе пулнӑ. Парйатинский ӑна хӑтарма пынӑ ҫух Ун-

кӑ шывӗ ҫинҫе, Ҫӗрпӳрен 10 ҫухрӑмра, ӑна хирӗҫ 2000 ҫӑвашпа ҫармӑс тухнӑ. Пӑрйатинский вӗсене ҫӗнтерсе хӑваласа йанӑ. Ҫук уйӑхӗн 3-мӗшӗнҫе Парйатинский Ҫикмене Раҫин ҫыннисенҫен туртса илет.

Й е т ӗ р н е у й е с ӗ раштав уйӑхӗн 3-мӗш кунӗнҫе Матвей Кровков полковника пӗтӗм пулккипе хатӗрӗпе Парйатинский патне Ҫикмене пыма хушнӑ. Раштавӑн 23-мӗшӗнҫе Шупашкарта ӑна Ҫӗрпӳ патнелле Харакусы (Хура-Касси) йатлӑ йал патӗнҫе Парйатинскийпе пӗрлешме хушнӑ. Раштавӑн 30-мӗшӗнҫе Патӑр-йалӗ (Богатырева) вулӑсне ҫитсен ӑна Ҫӗрпӳ уйесӗнҫи ҫӑвашсенҫен вӗсем укӗнме пуҫласан, Раҫин йенелле ҫавӑрӑнмала мар тесе тупа илме хушнӑ. Пӑлхавӑра пуҫлакансене, паттӑртараххисене вӗлермелле, вӗсен пурлӑхне патша ҫине ҫырмалла; ытти ҫӑвашсене ҫырлахса ӗлӗкхи пекех пурӑнма хушмалла тунӑ. Парйатинский патнелле Сормӑ вулӑсне пынӑ ҫухне те унӑн тупа тутарса, ыйтса вӗлерсе пымалла пулнӑ. Ҫак хушнӑ ӗҫсене туни ҫинҫен кровков Парйатинскийе тӗнӗ йӗрӗпе ҫырса панӑ, анҫах унӑн ҫырӑвӗп пӗр пайӗ анҫах ҫухалмасӑр йулнӑ.

Ҫак ҫыру тӑрӑх Кровков раштав уйӑхӗн 28-мӗшӗнҫе пуҫлӑх пулса Ҫӗрпӳ патӗнҫе те, Ҫикме патӗнҫе те... патша ҫыннисемпе вӑрҫнӑ... Ҫӗрпӳрен Тихон Пестушев Патӗр-йалӗ вулӑсне... Иван Папаловпа, Андрей Тумаков стрелетса йанӑ, кӗсем ҫав Ҫӗрпӳ ҫыннисене вӗлернӗ, лашисене тумтирсене валеҫнӗ, виллисене Уикан леш йенне вӑрмана илсе кайнӑ. Хӑйсен тӑвансене ҫӑвашсене... вӗсем... ҫынсенҫен ан йулҫӑр, патша вырӑс ҫыннисене ан итлеҫ-

ҫӗр тесе каланӑ... касаксем патӗнҫен Кӑрмӑш уйесӗнҫен Туван йалӗнҫен вӗсем килни пилӗк кун... тутарсен, ҫӑвашсен, ҫармӑссен аттаманӗсем Ҫӗрпӳ уйес Йантри (sic) йалӗ Иселпайкопа Мимейко, Сурпейево йалӗ Токтамышка, Алипка Айтуканов, Ҫемейко Ҫуваков, нурӑссем, Исей-айко, Кипяксы йалӗсем—Ҫурапайко Ҫуракин, Шупашкар уйесӗ Йуманкассы йатлӑ йалти Петейко Кулпашев, Кукшин йатлӑ йал Илышлта, кам ывӑлӗ ӑна пӗлмест. Вӗсемпе пӗрле тутарсем ҫӑвашсем, ҫармӑссем виҫшер, тӑватшар пин ытларах та пухӑнаҫҫӗ; халӗ анҫах саланса кайрӗҫ. Кӗсем хӑйсем *) патша ҫарӗ ҫинҫен пӗлме, хӑйсен тӑванӗсене аттамансем патне ҫӗнме килнӗ... Йаҫка Малиҫкӑй аттаман... унпа пӗрле пин ытларах вырӑс, тутар, ҫӑваш ҫармӑс кайрӗҫ. Улатӑр патӗнҫе вӗсен патша ҫыннисемпе вӑрҫӑ пулҫӗ тӗ, вара вӗсем Улатӑртан Саранска йухтарҫӗҫ... Ҫӗрпӳ уйесӗнҫи Карайкассипе Тосаевӑ йатлӑ йалсем вӑрӑ ҫыннисемпе (Расин ҫыннисемпе) пӗрле, кӑрмӑш, Шупашкар, Йетӗрне уйесӗпе пӗр канаш тӑваҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем патшана пӑхӑнмаҫҫӗ“.

Пӑтӑр-йалне ҫитнӗ. Пӑтӑр-йалӗнҫе вӑл ҫын та, хатӗр те, лаша та тупман. Ҫул ҫинҫе тытнӑ ҫӑвашсем укӗнсе тупа тунӑ. Пӑтӑр-йалӗнҫен (раштав уйӑхӗн 31-мӗшӗнҫе) Упи вулӑсне Тоса-Кассы йӑтлӑ йала ҫитнӗ. Каллех йалӗ пушах ҫын та, лаша та, ытти выҫӑх та, ҫӑкӑр та ҫук, анҫах йалтан вӑрмана ҫӗнӗ ҫулсем туни паллӑ пулнӑ. Ҫав йӗрӗсем тӑрӑх ҫӑвашсене шырама йарсан вӑрманта кӗсене

*) Тыткӑна лекнисем.

вӑрҫма хатӗрленнӗскерсене тӗл пулнӑ. Вара ҫав вырӑна салтаксемпе потполковник Петр Скорисовпа майор Ив. Хотырева йанӑ. Ҭӑвашсене тыткӑна илнӗ нумайӗшне кассса та пӑрахнӑ, хӗнене те кунта вара „Пехтемейко Ахтупаев“ йатлӑ ҭӑваш тарханне (ҭӑваш уйрӑм пурӑннӑ ҭуххнехи улпут йӑхӗ) тыткӑна илнӗ. Ҫӗрпӳ ҫынни Каврил Толмаҭӗвпа, Паҭӑр-йалӗпе Упи вулӑсӗнҭи ҭӑвашсем ӑна паллланӑ, Ҫӗрпӳ патӗнҭе Парйатнискийе хирӗҫ вӑрҫнӑ ҫын тенӗ.

Тархан асаплантара, асаплантара ыйта пуҫласан ҭӑтайман, Ҫавалӑн ҫур-ҫӗр йенҭи халӑхӑн пуҫлӑхӗсен йаҭӗсене каласа кӑтартнӑ: ,,аттамансем: Паҭӑр-йалӗ вулӑсенҭи Анҭик Пойкин, Пимурҫа Ишмурҫин, Тепексей вулӑсӗ Искей йатлӑ йалти Тойтимерко Емансин; праппӑршҭиксем: Имикейка Йшпулатов, Иҫпатарка Пиктушев; йесаул Алтикейко Тотишев. Тупа тунӑ ҭӑвашсене ҫак ҫынсене тытса килме хушнӑ та, кӗсем вара икӗ праппӑршҭикпе йесаула тытса пынӑ. Кӗсем те асаплантарсан, асаплантарсан ҭӑтайман. Акӑ вӗсенҭеп ҫырса илнӗ проттокколӗ (халҭхи шутпа каласан): „Вӑрӑ ҫыннисемпе Раҫин ҫыннисем).

Вара Кровков (кӑрлаҭӑн 1-мӗшӗнҭе) Степан Левайувпа Василий Репин каппитансене салтаксемпе ҫав йалсене йанӑ: йалсене ҫптиҭҭенех вӑрҫӑ тапранса кайнӑ. Каппитансем ҫӗнтереймен пирки Кровков патне пулӑшу ыйтма йанӑ. Пулӑшма Ив. Хотырев майорпа Хветот Уваров каппитан пынӑ. Вӑрҫӑ питӗ пысӑк пулнӑ: пӗрӗмӗш сехетрен кайранхиҭҭенех; Раҫин ҫыннисене ҫӗнтерсе Кӑрмӑш уйеснелле хӑваласа йанӑ.

Вăрçăран таварăннă ҫух Каракос йалĕ (sic) патĕнҫе Сормă арманĕнҫе салтаксемпе улпутсем шывран касса вĕлернĕ çынсене вун çиҫĕ çын кăларнă. Çыннисем вилни йумай пулман, хăшĕнҫен йун та йухса тăнă. Кĕсемсĕр пуçне шывра вилĕ тата та пулнă. Çакăн пирки улпутсем хăйсен тыткăнри ҫăвашсенҫен пăвăртласа, асаплантарса ыйта пуçланă. Вĕсем акă мĕн каланă: „пирĕн вун икĕ пине йахăн çын пирĕнтен тыткăна илнĕ аттамансене, есаула, прапăрщиксене кайалла туртса илес тесе пухăннă. Вилĕсем çинҫен... епир вĕсене патша çыннисем пĕр вăхăтра килмеççĕ „пĕҫиккĕп-пĕҫиккĕн килеççĕ" (хушса калани куçараканăн) тенине илтсе вĕлертĕмĕр, тенĕ. Вĕлерни 50 çын ытла пулнă, вара вĕсене шыва пăрахнă. Аслă патшана хăйĕн айăпсене каласа ўкĕнсе тупа тăвакансем те ҫăн мар—... касаксем килиҫен çеç, лешсем килсенех вĕсенпе пĕр пулаççĕ".

Кăрлаҫăн 2-мĕш кунĕнҫе Кровков „Каракосы" йалне пынă, анҫах унта çын та, лаша та, пурлăх та, тырă та, Шупашкар, Сĕве, Çĕрпў уйессене çав йалти çынсене кўртмелле мар тесе çырса йанă. Çак вăхăтрах ку йалти ҫăваша опосра пулккри патша салтаккисене сăнаса çўренĕ ҫухне тытнă та, асаплантара-асаплантара ыйта пуçланă. Ку вара каласа кăтартнă: „Пирĕн йалти ҫăвашсем хĕрарăмсемпе, аҫисемпе, пĕтĕм пурлăхĕсемпе Шупашкарпа Кăрмăш уйессене тарса пĕтнĕ, Паретинский войевотана хирĕç Кăрмăш уйесĕнҫе Йантапа йалĕнҫе... халăх питĕ нумай пухăннă, миçе çын иккене вĕсен полковникĕ Йантапа çынни Пайтул Искеев пĕлет, тенĕ.

Пайтул Искеева тытма Кровков каллех потполковник Скориковпа ўкĕнвĕ ҫăваш Йанмăрсана йанă. Вара вăл йалта ҫăвашсене ҫĕнтерсе Пайтула тыткăна илнĕ. Пăвăртласа ыйтсан вăл каланă: „Раҫин ҫыннисем патĕнҫе вăл полковник пулнă, аттаманĕ унăн Искей йалĕ Тойтемирка Емайтин пулнă, кунҫҫен малтан вăл патша ҫыннисемпе Д. А. Паретинский воевотана хирĕҫ нумай вăрҫăра пулнă. Ҫĕмпĕр патĕнҫе; Ҫĕрпӳ патĕнҫе вăрҫнă. Кăрмăш, Йетĕрне, Шупаштар уйесĕнҫе нумай пухăннă. Йантапара вĕсем пин ҫын пуҫтарăннă та, Паретинский опосĕ патне Харакус йалне пынă. Вĕсем патне Кăрмăш уйесĕнҫен Туван йалĕнҫен Василйев Ҫеркей патĕнҫен аттаман килнĕ. Манăн пулкка хире-хирĕҫ Йантапара, Сурăмра икшер пин тăраҫҫĕ. Ҫеркей Василйев аттаманĕсенех кĕтсе тăраҫҫĕ; „Каракусы“ йалĕнҫен Кровков кăрлаҫăн 4-мĕшĕнҫе Кăрмăш уйесне (ĕлĕкхи шутпа Йантапа вулăсне) Йантапа йалне ҫитнĕ. Йалĕ пĕр ҫунсăрах пулнă. Тытса килнĕ ҫынсем, айал ҫыннисем пурте вăрманта, тенĕ. Тепĕр кунах вăрмана салтаксемпе Хотырев майора йанă. Вăрҫă хыҫҫăн виҫĕ ҫын тыткăна илнĕ. Ҫĕрпӳ уйесĕ Норус йалĕ Ихенпайко Капаев, Йантапасем Мамаев, Патăр йалĕ прапноршҫикĕ Мăрсан. Кĕсем каллех асаплантарсан-асаплантарсан каланă. Пирĕнпе пĕрле вырăс, тутар, ҫăваш виҫĕ пин ҫын пухăннă. Аттамансем: Йетĕрне уйес Вылы йалĕ Атенейко, Кăрмăш уйес. Алмен йалĕ Итупайко Мамаев, Нурăс йалĕ Пайтимерко Амелкеев, Алтупайко Штупаев, Охны йалĕ Кулейтко Пайситов, Ҫӳнпеево йалĕ Тохтамышко Татеев; Шупашкар уйесĕ Йаманкассы Кукшин йалĕ Петейко. Вĕ-

семпе пĕрле Вылы, Хоҫаш, Йапаш йалсен, пĕтĕм Кăрмăш уйес, Ҫĕрпӳ уйесĕнҫи Йантри йалĕ ҫыннисем, Нурăс, Каракус йалĕнҫи пĕтĕм ҫăваш пухăннă Ытти йалсене астăваймастăп. Вĕсем нумай вăрҫăра пулнă, Ҫĕмпĕр патĕнҫе те, Ҫĕрпӳ патĕнҫе те, войевотсемпе Ю. Н. Паретинский, Д. А. Паретинский кңаҫпа вăрҫнă. Халĕ епир Кăрмăш уйесĕнҫе Туван йалĕнҫе вырăс аттамансемпе: Ҫеркей Василйевпе Иван Песпалыйпа пулнă. Кăрлаҫăн 31-мĕшĕнҫе Ҫеркей Василйев Д. А. Паретинский Ҫикмерен Кăрмăш уйесне, Кровков Шупашкартан пĕрлешме пынине илтсен, Исенпайа ҫарпа Сормă арманне йанă.

Вĕсем патша ҫарне ҫăвашсем тупа ан туҫăр тесе Сормăн леш йенне йамалла мар тунă. Кăрлаҫăн 1-мĕшĕнҫе Хусантан Йетĕрнене йут ҫынсемпе стрелетсем 18 ҫын пынă. Ҫăвашсем вара вĕсене тытнă та, ҫыхса пăрахнă. Алменево йалĕсем Итупай Мамаев аттаманĕ вĕсене касса арман айне шыва пăрахма хушнă; 18 тенкĕ укҫине лашисене хăй ҫыннисем хушшинҫе валеҫме хушнă. Вĕсем патне йалтан ҫăвашсем пырса вырăс ҫыннисем Туракассы йалĕнҫе тăраҫҫĕ, вара епир арман хыҫĕнҫен виҫĕ ҫулпа кайрăмăр та. Туракассыпа Тосаево йалсем патĕнҫе патша ҫарĕ ҫыннисемне тытăнса вăрҫнă. Ҫав вăрҫăра пирĕн ҫăвашсене нумайĕшне вĕлернĕ, суранлантарнă, тыткăна та илнĕ. Вăл вăрҫăран вара тарса Йантапапа пынă. Унтан вара Ҫеркушка Василйев аттаман вĕсемпе Д. А. Паретинский кңаҫ опосĕ патне кайнă. Пĕтĕм ҫарне хăйĕн арăмпе, аҫисене Йетĕрне уйесне Оҫас йалне Ҫемеккей патне кайма хушнă.

Хӑйсем патша ҫарӗпе каллех вӑрҫнӑ та ҫӗнтереймесӗр тарнӑ. Ҫеркушка Василйев вара хӑй те йулташӗсемпе вӑрҫса ҫыннисемпе Йетӗрне уйесне Оҫ̌аса Ҫемеккей патне тарнӑ... Сӗве войеводне Петр Котунова Хотар уйӗнҫ̌е Шупашкар уйесӗнҫ̌и Татмӑш ҫ̌арашсем вӗлернӗ, йаҫ̌ӗсене пӗлместпӗр.

Тата ҫак Кровковӑн ҫырӑвӗнҫ̌ех тепӗр ҫ̌ӑваш Уреней Пайкин йаҫ̌ӗ пур. Ку ҫав Сормӑ арманӗ патӗнҫ̌е патша ҫыннисене пӗтерпӗ ҫ̌ухне питӗ паттӑр ӗҫленӗ, патша ҫарӗсем ӑҫта тӑнине нумайийи—сахаллине пӗлсе ҫӳренӗ, Раҫин ҫаррине ҫул кӑтартса патша ҫарӗ патне йертса пынӑ.

Ҫӗрпӳ уйесӗнҫ̌и Раҫина пулӑшнӑ ҫ̌ӑваш йалӗсен йаҫ̌ӗсем халиҫ̌ҫ̌ен те ҫухалман. Акӑ вӑл вырӑсла:

Роспись Цывильского уезду которых волостей Ясачная чюваша государю царю... (титул) в винах своих добили челом и в таборех и в Цывильску сколько человек шертвовали и которых волостей и деревень чуваша к шерти в Цывильск не поехали и которых волостей и деревень шертвовав в государю изменили.

Цывильская ясачная чюваша подгородных да Рунгинских да Кошкинской да Богатыревской волостей в таборех и в Цывильску шертовали 1243 человека.

В таборех и в Цывильску не шертовали и в Цывильск не поехали 2 толмачеств.

Тугаевские волости Уразмаметевы сотни Яманчюрина.

| | |
|---|---|
| деревни [Б] айгилдины | д. Яншиховы |
| д. Тоиси | д. Шущровы |
| тоеж деревни Тоиси | д. Ялдры |
| д. Тоиси же | д. другие Ялдры |
| д. Бощиковы | д. Ахпердеевы (sic) |
| д. Нюргеси | д. Котляковы |
| д. Мокры | д. Иделмеси |

Всего 14 деревень.

Тугаевские волости Янчюрина сотня Янибякова.

| | |
|---|---|
| д. Искеевы | д. Седелевы |
| д. Седелевы | д. Хирбоси |
| д. Хирбоси | д. Хирбоси же |
| д. Седелевы | д. Тугаевы |
| тоеж д. Седелевы | д. Буртасы |

Всего 10 деревень.

Обоего Уразмаметевы и Янчюрины сотен 24 деревни.

Волости Тугаевские Тоншевы сотни Степанова.

| | |
|---|---|
| д. Чюрачиковы | д. Имишевы |
| д. Чюрачиковы же | д. Ноурусовы |
| д. Шугаевы | д. другой Ноурусовы |
| д. Степановы | д. Муратовы |
| тоеж д Степановы | д. Муратовы же |
| д. Выслеевы | |

Всего 11 деревень.

Волость Убеевская Устажарова сотня.

| | |
|---|---|
| д. Янмурзины | д. Убеевы |
| д. Янмурзины же | д. Аликеевы |
| д. Янмурзины же | д. Янмурзины же |
| д. Янмурзины же | д. Досаевы |

Всего 8 деревень.

Волость Чимерчеевская

| | |
|---|---|
| д. Чимирчеевы | д. Чимирчеевы |

Обоего Чимирчеевских.
2 деревень.

Всего Тугаевской и Удеевской и Чимирчеевской волостей 21 деревня.

Сердеевских волостей князь Уразлины сотни.

| | |
|---|---|
| д. Мяминской | д. Яушевы |
| д. Уразлины | д. Ахпердеевы |
| д. Чаллы | д. Васкины |
| д. Атиковы | д. Васкины |

Яшкитовы пятидесятни.

д. Искеевы.

Байдушевы сотни.

д. Хоракасы.

Багатыревские волости Воскиреевы сотни.

| | |
|---|---|
| д. Багатыревы ж. | д. Аткеевы |
| д. Шахсудины | д. Аткеевы ж. |

Рунгинских волостей
2 деревни Кошлоуш
Кошкинской волости
трех деревень Шонютинских
д. Норваш
Тугаевские волости Тоишевы сотни
д. Чеменевы (sic).

Всего Сюрдеевских и Рунсинских и Кошкинской и Тугаевской и Багатыревской волостей 20 деревень.

И всего Цивильского уезду 2 толмачеств всех деревень да 2 толмачеств розных деревень в государю в таборех и в Цывильску не шертовали 16 деревень.

В. государю шертовав изменили Батыревские волости чюваша

д. Салтыгановы
д. Багатыри
д. Багатыри ж
д. Шахсудины
д. Шахсудины ж
д. Байдушевы
д. Бидирсовы
д. Аткеевы.

Кун тăрăх карттă çине пăхсан, хăш-хăш йаӡĕсем халӡхи пек мар пулсан та, пирĕн акă мĕн ăнланса илмелле: Раçина ӡăваш çĕрĕн варри, икĕ Çавал, Пысăк Шетмĕ, Ункă шыв çинӡи йалсем пурте пулăшнă. Хĕвел анăç йеннелле Йетернĕ уйесĕнӡе çармăс йалĕсем патне тата Кăрмăш уйес ӡиккине çитиӡӡенех пур ӡăваш та Раçина пулăшнă. Раçина ӡăваш халăхĕ те манман. Шупашкар уйесĕнӡе ӡăваш халапĕ тăрăх Раçин хай те пулнă, Кăрмăш уйесĕнӡе 40 пиӡке ылттăн пытарнă...

Раçин вăрçи мĕнле пĕтнине пурте пĕлеççĕ. Лайăхрах вĕренпĕ патша салтаккисем Раçин çыннисене салатса пĕтернĕ. Раçина хăйне тăваткăл туса касса пăрахнă. Ăна пулăшаканнисене те çакнă, каснă, тĕрмене сăнӡăрласа лартнă.

Çакăн пек пĕтнĕ çынсем хушшинӡе ӡăваш çынни те нумай пулнă.

*А. В. Васильев.*

Третья Государствен. Типография в Казани.